26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943
ДЕКАБРЬ
8
ЮНКУН
242(6479) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ИСТОРИЛЛĔ РЕШЕНИ

Виçĕ держава руководителĕсем—Сталин, Рузвельт, Черчилль—пирĕнпе союзлă Иран çĕршывĕн столицинче тĕл пулни çинчен—çак историллĕ тĕлпулу çинчен пĕлтерни мĕнпур тĕнчене хускатрĕ. Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн боевой союзĕ татах та ытларах çирĕпленнине пынине, виçĕ аслă держава пĕртĕрлĕн татах та таччăнрах çыхăнса ĕçлеме тытăннине çĕнĕрен яр-уççăн кăтартса паракан çак тĕлпулу ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене çĕнĕ çутă шанчăк парса хавасланатарчĕ, гитлерла коалици лагерьне шиклентерсе ӳкерчĕ, ултăратса ячĕ.

Виçĕ державăн Декларацийĕ—историре пысăк вырăн йышăнса тăракан документ. Хаяр та ишелтерекен вăрçăпа асапланакан тĕнчене çав документ ĕмĕтленнĕ çĕнтерӳ çывхарса килни çинчен пĕлтерет.

Анчах вăл çĕнтерӳ кунĕ çитесси çинчен пĕлтерекен хыпар кăна мар, халăхсем хушшинче нумай вăхăтлăха çирĕп мир пуласси çинчен пĕлтерекен хыпар та пулса тăрать. Çакă вăл Гитлерăн юнлă та тискер ĕмĕчĕсене çĕнĕрен аркатмаллах пырса çапни пулать. Виçĕ державăн Декларацийĕ Великобританипе ССР Союзĕн тата США-н ирĕклĕхшĕн, гитлерла тирание хирĕç пыракан вăрçă вăхăтĕнче туптанса çирĕпленнĕ боевой союзĕ малалла çирĕпленсе пынине кăтартса парать.

Виçĕ державăн Декларацийĕ США-па ССР Союзĕн тата Великобритани пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлесси мĕнпур вăрçă пынă тапхăрта малалла аталанса пынинчен тӳррĕмĕнех тухса тăрать. 1941 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчех Сталин юлташ çакна кăтартса панăччĕ: «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата ССР Союзĕн коалицийĕ чăннипех пулса пыракан ĕç тесе шанчăклăн калама пулать, çав ĕç ирĕклĕхшĕн пыракан пирĕн пĕрлехи ĕçе усă кӳрсе ӳссе пырать тата малалла та ӳссе пырĕ».

1942 çулта Англипе ССР Союзĕ хушшинче тунă Союзлă Договор, çавăн пекех тата агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне ăнланмалли принципсем çинчен тунă Совет Союзĕпе Америка хушшинчи килĕшӳ те çав сăмахсене чăплăн çирĕплетсе пачĕç. Союзлă державăсем хушшинчи кĕрешӳри туслăх çирĕпленсе пынине кăтартса паракан паха фактсем—В. М. Молотов юлташ Лондонпа Вашингтона кайса килни тата Великобританин премьер-министрĕ Черчилль господин Мускава килсе кайни пулса тăчĕç. Юлашкинчен виçĕ держава хушшинчи союза çирĕплетес ĕçре Великобританин, ССР Союзĕн тата США-н ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Мускаври конференцийĕ пысăк вырăн йышăнчĕ.

Союзлă виçĕ державăн министрĕсен Мускаври конференцийĕ пулнăранпа нумай та вăхăт иртмерĕ. Унăн решенийĕсем Великобританипе ССР Союзĕ тата США вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕринпе туслă çыхăнса ĕçлесси çирĕпленнине кăтартса пачĕç кăна мар, çавăн пекех тата вĕсем вăрçă хыççăн пĕрле ăнаçлăн ĕçлемелли никĕсе те çирĕп хывса хăварчĕç. Унтанпа ĕнтĕ мĕн тери пысăк утăм малалла ярса пуснă!

Тегеранри конференцире Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ, Великобританин премьер-министрĕ тата Совет Союз Правительствин пуçлăхĕ союзлă державăсен вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи **пĕрлехи политикине** йĕркелесе çирĕплетрĕç. Виçĕ державăн Декларацийĕнче çапла каланă:

«Эпир çакна çирĕп шантарса калатпăр: пирĕн çĕршывсем вăрçă вăхăтĕнче те, çавăн пекех тата ун хыççăнхи мирлĕ вăхăтра та пĕрле ĕçлесе пырĕç».

Вăрçă тĕлĕшпе тăракан татăклă тĕп задача паллă. Çакă вăл—гитлерла Германие хăвăртрах тата пуçĕпех çапса аркатасси пулать. Мускаври конференциех вăрçа пĕтерес ĕçе хăвăртлатассине пĕрремĕш тĕллев тесе йышăнчĕ. Çав тĕллеве пурнăçа кĕртес тесен, союзлă державăсен тата мĕнпур Пĕрлешнĕ нацисен пĕтĕм вăя хурса, пĕрле тăрса кĕрешмелле, союзлă державăсен аллинчи çав тери пысăк вăйсене кĕрешӳре пĕр-пĕринпе килĕштерсе пымалла. США-па Великобритани тата Совет Союзĕн конференцийĕнче Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтерсе тăкмалли плансене пĕр-пĕринпе килĕштернĕ, тăшмана пырса çапмалли пĕп йĕрсене, операцисен срокĕсемпе масштабĕсене палăртса хунă. Германие хĕçпăшаллă вăйсене пĕтерсе тăкасси патне илсе пыракан пĕрлехи вăрçă ĕçĕсем çинчен ... нихăçан та çавăн пек татăклăн та уçăмлăн пулман.

«Эпир,—тенĕ Декларацире,—операцисен масштабĕсемпе срокĕсене тĕлĕшпе калаасса татăлтăмăр, çак операцисенче хĕвелтухăçĕнчен, хĕвеланăçĕнчен тата кăнтăртан ... Эпир кунта пĕр-пĕрне ăнланса çитни, пире çĕнтерӳ тума май парать».

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене çапса аркатса пĕтерсе тăкмалли плансем, конференцире çирĕплетнĕскерсем, çапла ĕнтĕ Гитлерăн çарĕсене пĕр вăхăтрах тĕрлĕ енчен аркатмаллах пыра-пыра çапассине палăртса хунă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар гитлерла йытă кĕтĕвĕсене çĕнтерсе пынине пула, пирĕн союзниксем ăнăçлăн кĕрешсе пынине пула, вăрçă ĕçĕсем тĕпренех пирĕн майлă улшăнчĕç. Союзлă державăсем хĕçпăшаллă вăйсем тĕлĕшпе тата материалсемпе техника ресурсĕсем тĕлĕшпе тăшманран тӳррипех малта тăраççĕ. Виçĕ державăн гитлерла Германие хирĕç туса пымалли вăрçă ĕçĕсен пĕрлĕхлĕ планĕ çинче никĕсленсе тăракан боевой союзĕн çирĕплĕхĕ çав тери хăватлă вăй пулса тăрать, çак вăй хăй тытнă тĕллеве çитес тесе кирек мĕнле чăрмавсене те çĕнтерме пултарать. Ĕç халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патнелле çывхарса пырать.

«Германи çарĕсене,—тенĕ Декларацире,—типĕ çĕр çинче, унăн подводнăй лодкисене тинĕсре пĕтере-пĕтере тăкма тата вĕсен çар завочĕсене сывлăшран тапăнса арката-арката тăкма пире тĕнчере нимĕнле вăй та чарса тăма пултараймасть.

Пирĕн наступлени пĕр хĕрхенӳсĕр тата ӳссех пыракан наступлени пулĕ».

Çак сăмахсенче союзниксем хăйсен вăйĕсене иксĕлми шанса тăни палăрса тăрать. Çав шанчăк вăл союзлă державăсен вăрçă вăхăтĕнче туптанса çирĕпленнĕ гигантла çар хăватне тĕрĕс хак пани çинче, пĕр-пĕринпе вăрçакан çĕршывсен вăйĕсемпе майĕсен шайне тĕрĕс анализ туни çинче, йывăр кризиса кĕрсе ӳкнĕ тата катастрофа умĕнче тăракан гитлерла Германин вăрçă тата политика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне шута илни çинче никĕсленсе тăрать.

«Халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те паллă: гитлерла ушкăн, хальхи вăрçа пуçласа ярса, Германие тата унăн хӳрешкисене хăтăлса тухма çук лачакана кĕртсе ячĕ. Фашистла çарсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче поражениесем тӳсни тата пирĕн союзниксем итальянецсемпе нимĕçсен çарĕсене пыра-пыра çапни фашистла блокăн пĕтĕм çуртне кисрентерчĕ, çав çурт халĕ ĕнтĕ пирĕн куç умĕнчех арканса пырать» (Сталин).

Аслă державăсен — США-па ССР Союзĕн тата Великобританин союзĕ чĕрĕ вăйлă та çирĕп пулни çакăнта та палăрса тăрать: конференцин историллĕ решенийĕ тăшмана çĕнтернĕ хыççăн мĕнпур халăхсене хăрушлăхран хăтарса, нумай вăхăтлăха çирĕп мир туса хумалли аслă майсене уçса парать.

Конференцин çав решенийĕ ертсе пыракан тата татăклă тĕп вăй пулса тăракан виçĕ аслă держава çине тĕнчен пулас кунçулĕшĕн пысăк ответлăх ӳкнине ăнланнинчен те тухса тăрать.

«Мирлĕ вăхăт тĕлĕшпе илсен, — тенĕ Виçĕ державăн Декларацийĕнче, — эпир — пирĕн хушăри хальхи килĕшӳлĕх çирĕп мир туса хума май парассине шанса тăратпăр. Çĕр чăмăрĕ çинчи халăх массисен ытларахăшĕ ырласа кĕтсе илес мире туса хурассишĕн тата вăрçă инкекĕсемпе хăрушлăхĕсене нумай ăрусемшĕн сирсе ярас мире туса хурассишĕн пирĕн çине тата мĕнпур Пĕрлешнĕ нацисем çине ӳкекен пысăк ответлăха эпир пĕтĕмĕшпех йышăнатпăр».

Союзлă виçĕ державăн руководителĕсен конференцийĕ дипломатиллĕ советниксемпе пĕрле малашлăхăн проблемисене пăхса тухрĕ те хăйĕн Декларацийĕнче çакна çирĕплетсе пачĕ: тирание, чуралăха, пусмăрлăха тата пĕр-пĕрне курайманнине хирĕç, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсен çĕршывĕсем, пысăккисемпе пĕчĕккисем те, пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата активлăн хутшăнса ĕçлемелле тăвассине США-па ССР Союзĕ тата Великобритани хăйсен задачи тесе шутлаççĕ.

«Тирание, чуралăха, пусмăрлăха тата пĕр-пĕрне курайманнине сирсе ярас задачăна, пирĕн халăхсем пекех, хăйсен чĕрипе тата ăс-хакăлĕпе параннă мĕнпур халăхсен çĕршывĕсем, пысăккисемпе пĕчĕккисем те, пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата активлăн хутшăнса ĕçлемелле тăвассишĕн тăрăшăпăр эпир. Вĕсем демократиллĕ çĕршывсен тĕнчери çемьине хăйсем кăмăл тунă вăхăтра хутшăннине эпир саламлăпăр», — тенĕ Декларацире.

Виçĕ аслă держава пĕчĕк государствăсем çине мĕнле пăхнине кăтартса паракан уçăмлă та ĕнентерӳллĕ тĕслĕх вĕсем Иран пирки йышăннă Деклараци пулса тăрать. Çав Деклараци союзлă державăсемпе пĕрле ĕçлекен кашни государствăн интересĕсем çине тимлĕн пăхни çинчен калать.

Деклараци Пĕрлешӳллĕ Штатсен, ССР Союзĕн тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн правительствисем Иранăн никама пăхăнманлăхне, унăн правительствипе тата унăн территорине тĕкĕнмелле маррине сыхласа хăварма тăрăшнине уйрăмăн палăртса хăварнă.

США-па ССР Союзĕн тата Великобританин правительствисем — вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕтĕм тĕнчере мир, хăрушсăрлăх тата прогресс тăвас ĕçе мире юратакан ытти нацисемпе пĕрле Иран та хутшăнĕ тесе, шанса тăраççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ конференцин итогĕсем, вĕсем ирĕклĕхе юратакан халăхсем чи ырă кăмăлпа шанса тăнине тата гитлерла пуçкасакансем пуринчен ытларах хăраса тăнине тӳрре кăларчĕç.

Гитлера хирĕçле коалицие пĕтĕçсе тăнă виçĕ державăн боевой союзĕ, Совет Союзĕнчи, Великобританири тата Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи аслă халăхсен, гитлерла тирание хирĕç кĕрешӳ ялавне çĕкленĕскерсен туслăхĕ вăрçă вутĕнче пиçĕхсе çирĕпленчĕ. Конференци виçĕ аслă держава пĕр-пĕрне ăнланса пурăнассине тарăнлатрĕ, вĕсен туслăхне çирĕплетрĕ. Çавна ĕнтĕ союзлă виçĕ державăн руководителĕсен питех те витĕмлĕ сăмахĕсем кăтартса параççĕ.

Вĕсем хăйсен Декларацийĕнче çапла каласа хăварчĕç:

«Эпир кунта çирĕп шанчăк хывса килтĕмĕр. Эпир кунтан хамăрăн шуханш-кăмăлпа тĕллевсем тĕлĕшпе чăнчăн туссем пулса тухса каятпăр».

Тегеранри конференцин çĕçсене тивĕçлипех пĕтĕм тĕнче сăнаса тăчĕ. США президенчĕ Ф. Рузвельт господин, Совет правительствин пуçлăхĕ И. В. Сталин юлташ тата Великобританин премьер-министрĕ У. Черчилль господин—çакă питех те паллă государство деятелĕсем, гитлерла Германие хирĕç виçĕ аслă державăн кĕрешĕвне ертсе пыраканскерсем, малтанхи хут тĕл пулни хăй те ĕнтĕ чаплă событи пулса тăрать. Вĕсем йышăннă решенисенчен пĕтĕм вăрçă малашне мĕнле пулса пырасси килет.

Союзлă державăсен руководителĕсен конференцийĕ — виçĕ державăн дипломачи тата çар тĕлĕшпе ĕçлекен чи паллă представителĕсем хутшăннипе пулса иртнĕ конференци — союзниксен вăрçă планĕсене пĕр çĕре пĕтĕçтерчĕ, Гитлерăн çарĕсене пĕтерсе тăкмалли пĕрлĕхлĕ плана туса хучĕ, çапла вара пĕрлехи тăшмана çапса аркатас тата вăрçа пĕтерес ĕçе çывхартрĕ.

Тăшманпа малашне татах хаяр та юнлă тытăçусем пулса иртĕç. Анчах тăшмана хаяррăн айăплакан приговора йышăннă ĕнтĕ. Çав приговор пурнăçа кĕрĕ. Çавăн шанчăкĕ — союзлă виçĕ держава руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ йышăннă историллĕ решени пулса тăрать.

(«Правда», декабрĕн 7-мĕшĕнчи пуçстатьярăн)

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçсе парас ĕçе большевикла организацилер!

Сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçнĕ

ЙĔПРЕÇ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса тата Сталин юлташ пирĕн патăра Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшма чĕннине ответлесе, Йĕпреç районĕнчи колхозсемпе колхозниксем государствăна тырă сутмалли плана ăнăçлăн тултарчĕç, сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Хатĕрлев пункчĕсене тырă халь те çаплах килсе тăрать.

Ф. АРТЕМЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сутнă тырра çак кунсенчех хатĕрлев пунктне леçсе пĕтеретпĕр

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районра малта пыракан «Дружба» (председателĕ Щербаков юлташ), «11 лет Октября» (председателĕ Горелкин юлташ), «Смычка» тата ытти колхозсем те государствăна сутнă тырра икĕ-виçĕ кун хушшинчех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Паянхи куна ку ĕçе 16 колхоз йăлтах вĕçленĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районри пур колхозсем те государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе пĕтереççĕ. Халĕ ку тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕç пырать. Районĕпе декабрĕн 6-мĕшĕ тĕлне государствăна 93.020 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 70.150 пăт леçсе панă.

А. СОМОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хатĕрлев пунктне лав хыççăн лав куçать

ИШЛЕЙ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем государствăна тырă сутассине татах вăйлатса ячĕç. „МОПР“ колхоз декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3.600 пăт сутнă пулсан, ун хыççăнхи икĕ кун хушшинче татах 1.220 пăт сутрĕ. Çавăн пекех юлашки икĕ кун хушшинче „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз 2.220 пăт, Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз 816 пăт, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1.222 пăт сутрĕç. „МОПР“ колхоз членĕ П. Лисицев (унăн пĕр хĕрĕпе тăватă ывăлĕ нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç çапăçаççĕ) хăйĕн перекетлесе усранă тыррине 14 пăт сутрĕ. Сутнă тырра халь васкаса хатĕрлев пунктне леçеççĕ.

А. Толстов.

Колхозниксем хăйсен сăмахне пурнăçларĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ, декабĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхоз членĕсем ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче государствăна сутнă тырра Сталинла Конституци кунĕ тĕлне—декабрĕн 5-мĕшне хатĕрлев пунктне леçсе пĕтерме обязательство илнĕччĕ. Декабрĕн 4-мĕшĕ тĕлне районри пур колхозсем те хăйсем çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕç. Государствăна сутнă тырра пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктне леçсе пĕтерчĕç.

И. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государствăна тырă сутакансене—таварсем

Шупашкар райпотребсоюзĕ государствăна тырă сутнă колхозсемпе колхозниксене сутмашкăн 2.351.700 тенкĕлĕх тавар илнĕ. Çак хисепрен декабрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 435.000 тенкĕлĕх ялсенчи лавкасене салатнă. Государствăна тырă сутнă колхозниксемпе колхозницăсене районри ялсенчи лавкасенче пурĕ 3 тонна супăнь, 40.000 тенкĕлĕх табак, 5.000 тенкĕлĕх чăлха-носки таврашсем, 10 тонна краççин тата ытти тĕрлĕ таварсем (вăл шутра ситцă, пустав тата ытти те) нумай сутмалла.

Таварсене—колхозсене государствăна тырă сутнине кăтартакан квитанцисем тăрăх, колхозниксене—государствăна тырă сутнине палăртса колхоз правленийĕ паракан квитанцисем тăрăх параççĕ.

Ф. ПЕТРОВ,
Шупашкар райпотребсоюзĕн председателĕ

Государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăннă тата сутнă тырра Заготзерно пункчĕсемпе ялпо склачĕсене вăхăтра леçсе панă çак колхозсемпе колхозниксене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

13. **И. Яковлев** — Комсомольски районри «Трактор» колхозăн членĕ. Вăл государствăна 67 пăт тырă сутнă.
14. **П. Цаплин** — Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхозăн членĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
15. **И. Моисеев** — Шăхасан МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
16. **М. Афанасьев** — Советски районри «1-ое мая» колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 96 пăт тырă сутнă. Пĕтĕм сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе панă.
17. **Соловьев** — Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермин заведующийĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
18. **Н. Ефремов** — Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
19. **Е. Никитин** — Вăрмар районĕнчи «Красный Мурат» колхозăн счетовочĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
20. **С. Семенов** — Советски районри «Новая победа» колхозăн бригадирĕ. Вăл государствăна 60 пăт тырă сутнă.
21. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн **транспорт бригади.** Вăл государствăна сутнă тырра Заготзерно пунктне кĕске срокра леçсе парса пĕтернĕ. Хохлов, Марков, Турлычкин, Муравьев тата Шевнин колхозниксем уйрăмах лайăх ĕçленине палăртмалла.
22. **Вăрнар районĕ** (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **С. Коротов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **П. Осипов** юлташ).
23. **Тăвай районĕ** (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **А. Молоствов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **И. Широв** юлташ).
24. Калинино районĕнчи **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Николаев** юлташ). Вăл государствăна 5.120 пăт тырă сутнă. Сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă. Государствăна тырă сутмалли плана 102 процент тултарнă.

Тырă леçес ĕçе вăраха яраççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районĕпе паянхи куна государствăна 138.017 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 71.219 пăт, сельпо склачĕсене 25.000 пăт ытла леçнĕ. Государствăна сутнă тырра 21 колхоз хатĕрлев пунктне леçсе пĕтернĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем сутнă тырăшăн ялти лавкасенче супăнь, краççин, тăвар тата ытти таварсем те илеççĕ.

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçесси пур колхозсенче те аван пулса пымасть-ха. «1-ое Мая» колхоз (председателĕ Малова), «Смычка» колхоз (председателĕ Иванова), Бойков ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Сидоров) сутнă тырăран 15 — 20 процентне çеç хатĕрлев пунктне леçсе панă. Асăннă колхоз руководителĕсем ку ĕç япăх пынине туртăм вăйĕ çителĕксĕрри çине йăвантарма пăхаççĕ. Тĕрĕссипе илсен, ку колхозсенче тырă турттарас ĕçе кĕске срокрах вĕçлеме лайăх майсем пур.

Çавăн пекех райсовет исполкомĕн хăштĕр уполномоченнăйĕсем те çак ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Районри суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Сорокин «1-ое Мая» колхозра государствăна сутнă тырра çийĕнчех хатĕрлев пунктне турттарса парас енĕпе нимĕнле мера та йышăнман. Ялти комсомолецсемпе çамрăксене çак ĕçе явăçтарман. Агитациллĕ-ăнлантарулла ĕç те сӳрĕк пырать. Çавна пула ĕнтĕ колхоз ку ĕçре чăтма çук юлса пырать.

Районри партипе совет активĕн, ялсовет тата колхоз председателĕсен государствăна сутнă тырра çак кунсенчех пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктне леçсе парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Çак ответлă ĕç çине çиелтен пăхни пулмалла мар.

Н. ГРИГОРЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 6-мĕшĕнче ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

ЧЕРНЯХОВ районĕнче пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем тунă атакăсене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та АЛЕКСАНДРИЯ хулине, ВЕРБОВКА, МОСКОВСКОЕ, ЕФИМОВКА, ЗАЛОМЫ, ПЛОСКОЕ, ГУТНИЦКАЯ, КРАСНОСЕЛЬЕ, ЦИБУЛЕВО, ВЕСЕЛЫЙ КУТ, БОДЯНА, КОНСТАНТИНОВКА, ЯСИНОВАТКА, МОРОЗОВКА, ЗВЕНИГОРОДКА, ГОЛОВКОВКА, ОЛИМПИАДОВКА, НОВО-НИКОЛАЕВКА, МАРЬЯНОВКА ятлă вăйлă тĕреклетнĕ пунктсене тата ДИКОВКА, АЛЕЕВКА, МОРОЗОВКА, БАЙДАКОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Вирлĕн пырса çапса, пирĕн çарсем СМЕЛА хулипе ЗНАМЕНКА хушшинчи чугун çула татса пăрахнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче развелка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 33 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

НИМĔÇСЕМПЕ ФИНН ВАРВАРĔСЕМ ЛЕНИНГРАДРИ ХАЛĂХ ПУРĂНАКАН КВАРТАЛСЕНЕ ТАТА ВĂРÇĂШĂН КИРЛĔ МАР ОБЪЕКТСЕНЕ ÇĔМĔРЕÇÇĔ

Нимĕçсемпе финн захватчикĕсен Ленинград патĕнче вырнаçнă артиллерийĕ темиçе уйăх хушши ĕнтĕ Ленинградăн çынсем пурăнакан кварталĕсене персе тăрать. Юлашки ик-виçĕ эрне хушшинче тăшман артиллерийĕ нумай вăйлăрах пеме тытăнчĕ. Ленинграда тытса илме хăтланнисем пĕтĕмпех путланса ларнă хыççăн нимĕçсемпе финн ирсĕрĕсем халь, çиллисене шăнараймасăр, вăрçăри ĕçĕсем ăнманнишĕн мирлĕ çынсене асап кӳреççĕ. Пурте пĕлеççĕ, хальхи вăхăтра Ленинградра çар объекчĕсем çук, çавăнпа та çакă пуриншĕн те паллă: хулана халь пĕртен пĕр тĕллевпе çынсем пурăнакан çуртсене ишес, культура памятникĕсене пĕтерсе тăкас, Ленинградри мирлĕ çынсене вĕлерсе пĕтерес тĕллевпе переççĕ. Кунта çакна палăртмалла: Ленинграда вăрçă енчен пăхсан пĕрех те ишме кирлĕ мар çĕртенех варварла ишессине пуринчен

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

ытла финн офицерĕсем хĕтĕртсе тăраççĕ. Финн правительстви çапла шухăшлать: финсемпе нимĕç çарĕсем Ленинграда ишсе тăксан, Совет Союзĕн Ленинград хăрушсăрлăхне сыхламалли пулмасть, тет. Анчах кимĕççемпе финн захватчикĕсем ку хутĕнче те йăнăш тăваççĕ. Ленинграда сыхлама, ăна малашне те хăрушсăрлăхра пурăнтарма, нимĕççемпе финн захватчикĕсен ирсĕр хăтланăвĕсене юлмиччен сапалама яма тата хăйсем туна тискер ĕçсемшĕн вĕсене тивĕçлипе ответ тытарма совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çарăн вăй çителĕклĕ.

* * *

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсен контратакисене сирсе ярса, малалла куçса пынă, тăшман оборонин темиçе пунктне тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн уйрăмах вăйлă çапăçнă. Нимĕçсем çав пункт патне артиллери, пулеметсем нумай илсе пырса тăратнă, питĕ вăйлăн хирĕç тăнă. Совет чаçĕсем, флангсенчен пырса çапса, нимĕçсен оборонине йĕркерен кăларнă та сăлă вĕççĕн çапăçнă хыççăн çав пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр виллн тата хĕçпăшалсем нумай вырта юлнă. Тепĕр соединени чаçĕсем кун каçиччен тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Черняхов районĕнче тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакаланă. Кунĕпех хаяррăн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн 8 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделени, 5 сехет хушши вăйлăн çапăçса, тăшманăн 4 танкне, «Фердинанд» йышши хăй тĕллĕн çÿрекен туппине, 2 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă тата 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, артиллерипе авиаци вăйлăн персе тăнă хыççăн, тăшман позицийĕсене атакăланă. Пирĕн боецсем, нимĕçсен оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ линийĕсене татнă та, вирлĕн малалла куçса, Смела хулипе Знаменка хушшинчи чугун çула татса пăрахнă. Тăшман пысăк çухату тÿснĕ. Пĕр пунктшăн çапăçнă чухне кăна совет чаçĕсем 900 гитлеровеца вĕлернĕ, 11 танк, 5 артиллери батарейи тата миномётсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. 6 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 5 тупă, 40 бронетраспортерпа автомашина ытла, хĕçпăшалпа çар пурлăхĕн 6 складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Кировоград облаçĕнчи район центрне—Александрия хулине, тăшман оборонин паха пункчĕ пулса тăраканскере, тытса илнĕ. Александрия хулишĕн пынă çапăçусенче тăшман сынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿснĕ. Совет боецĕсем хĕçпăшал, боеприпассем тата çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн катерне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 баржине шыва путарнă.

* * *

Литвари партизансен «Тăван çĕршывшăн» ятлă отрячĕ тăшманăн чугун çул станцинче тăнă эшелонне, бензин тултарнăскере, вут тĕртсе çунтарнă. Пушар тухнă. Пушарта станцири çурт-хуралтăсем нумайĕшĕ пĕтнĕ. Тепĕр отрядри партизансен уйкăнĕ 2 кун хушшинче нимĕçсен фронт патнелле каякан 2 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 2 паровоз тата çар хатĕрĕсем тиенĕ нумай вагон сĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 6-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 37-мĕш гренадерски полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Пауль Эрленкезер çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтчен эпĕ 362-мĕш гренадерски полкăн 1-мĕш батальонĕнче тăтăм. Çав полк Норвегире, Тронхейм хули патĕнче тăратчĕ. Сентябрь уйăхĕнче пирĕн батальона Совет Союзĕпе Германи фронтне ячĕç. Эпир çак маршрутпа килтĕмĕр: Осло—Скагеррак проливĕ—Штеттин—Торн—Варшава. Оккупациленĕ совет территорийĕнче партизансем пирĕн эшелона темиçе хут та печĕç, 20 салтака ытла вĕлерчĕç. Фронтра пире çийĕнчех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Пĕр атака хыççăн 3-мĕш ротăра 16 салтак, фельдфебель тата унтер-офицер тăрса юлчĕç. Ун хыççăнхи çапăçусенче батальон тата пысăкрах çухатусем тÿсрĕ. Унта 30—40 салтакран ытла юлмарĕ. Пурин те шухăш-кăмăлсем пусăраннă. Эпир пĕтесси пуриншĕн те паллă пулса тăчĕ. Хăшпĕр салтаксем Германин çĕнтерме нимĕнле май та çуккине пăхмасăрах Гитлер сынсене вилĕм патне хăваланăшăн ăна ÿççăнах вăрçаççĕ. Çак кунсенче вырăссем, артиллери персе тăнă хыççăн, атака турĕç. Эпир вĕсене чараймарăмăр. Нумайĕшĕ тыла тарса кайрĕç, эпĕ йышлă мар салтаксемпе пĕрле çав вырăнтах юлтăм. Эпир пурте аласене çĕклерĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр».

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Йĕпреç вăрманпромхозĕ çулталăкри плана тултарчĕ

ЙЕПРЕÇ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн вăрманпромхоз коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана срокчен тултарма сăмах панăччĕ. Эпир халĕ хамăр сăмаха пурнăça кĕртни çинчен пĕлтерме пултаратпăр. Декабрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн вăрманпромхоз çулталăкри плана хатĕрлес енĕпе 107 процент, турттарас енĕпе 100 процент ытларах тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем халĕ ĕç тухăçлăхне ытларах та ытларах ÿстерсе пыраççĕ. Вăрман касакан М. Преснова юлташ (вăл Çĕрпÿ районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозран) нормăна кулленех 150 процент ытла тултарать. Вăрман турттаракансем И. Максимов юлташ (вăл Йĕпреç районĕнчи «Красная звезда» колхозран), Куликова юлташ (Йĕпреç районĕнчи «Трактор» колхозран) кулленхи нормăна 140 процент тултараççĕ. Кун пек примерсене татах та илсе кăтартма пулать.

Вăрманпромхоз çумне çирĕплетнĕ Йĕпреç, Çĕрпÿ тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем пурте тимлĕн ĕçленĕ пулсан, плана тата ытларах тултарма пулатчĕ. Анчах та Çĕрпÿ районĕ вăрмана ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе халĕ те тивĕçлипе ĕçлемест-ха. Вăл районран, çуран 110 çын, лашапа 100 çын ĕçлес вырăнне, хальхи вăхăтра çуран 101 çын, лашапа 82 çын çеç ĕçлеççĕ. Ĕç вăйĕ çителĕклĕ мобилизацилемен пирки ĕнтĕ Çĕрпÿ районĕ фронтовой уйăхлăхра пурнăça кĕртмелли ĕçсем тĕлĕшпе кая юлса пырать. Чугун çул валли вутă 22.000 кубометр хатĕрлесе, 17.500 кубометр турттарас вырăнне, ку таранччен 16.000 кубометр ытларах çеç хатĕрленĕ. Турттарасси унтан та ытларах юлса пырать.

Фронтовой уйăхлăх иртсе пырать. Районсенчи партипе совет организацийĕсен тата ялти активăн, вăхăта вăраха ямасăр, вăрмана ĕç вăйĕ çителĕклĕ таранах мобилизацилес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Вăрман хатĕрлесси вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан задача пулса тăрать. Вăл задачăна хаклăманни пулмалла мар.

П. ФЕДОРОВ,
Вăрманпромхоз директорĕ.

Куллен виçшер кубометр хатĕрлеççĕ

ЭЛЕК. («Чăваш Коммуни» корр.). Хурисурти «Пĕрлешÿ» колхозран вăрман хатĕрлевĕнче кашни кун çуран 10 çын, лашапа 4 çын ĕçлемелле. Колхоз вăрмана ĕç вăйĕ кирлĕ таранах мобилизациленĕ, графика тĕрĕс пурнăçласа пырать.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем фронтовой уйăхлăха хутшăннă хыççăн тата тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Кашниех вĕсем кулленхи нормăна иртте́рсе тултараççĕ. Норма тăрăх пĕр кунта 2.5 кубометр хатĕрлемелле пулсан, София Александрова, Валентина Ефремова тата Валентина Николаева юлташсем виçшер кубометр ытла хатĕрлеççĕ. Вăтаманçăн илсен, «Пĕрлешÿ» колхоз членĕсем куллен кашниех 3 кубометр вутă хатĕрлеççĕ.

Сормпуç Мучикассинчи «Хĕрлĕ ялав» колхоз членĕсем те вăрманта тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку колхозран вăрман хатĕрлевĕнче 18 çын ĕçлемелле. Халь 18 çын тумалли ĕçе 14 çын пурнăça кĕртсе пырать. Агафия Степанова, Мария Трифонова юлташсем кашниех куллен 4 кубометр вутă касса, нормăна 160 процент тултараççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те çулларанпах вăрмантан тухмасăр ĕçлеççĕ. Колхоз правленийĕ вĕсене ĕçлеме пур услови́сем те туса панă.

Тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсем

АБДУЛ ГАЯЗОВ

Хĕн-хурлă та телейсĕр иртнĕ унăн ачалăхĕ. Пĕчĕк те лутра пÿртре нихçан та çавăрăнса тăма та май пулман.—Мĕскĕн Абдул, аслăрах тăванĕсене кансĕрлес мар тесе, пĕр кĕтессе хĕсĕнсе ларнă. Урама тухса, çутçанталăкпа савăнса киленнĕ пулĕччĕ вăл, анчах хăй çине пăхнă та хăй вăтаннă: çынсенни пек тăхăнмалли пÿтлĕ кĕпе-йĕмĕ те пулман унăн...

Вăл, яра-кунĕпех выçă антăхса çÿрекенскер, пуян çынсен ачисем тулă кулачи çинине курнă. «Аçтан тухать-ха вĕсен, — шутланă Абдул хăй ăшĕнче,—вĕсен хитре тумлантмалăх та, ĕçсе-çимелĕх те пур?..»

Ашшĕнчен виçĕ çулта чухне тăлăха юлса нумай хура-шур, асап тÿснĕ Абдул. Вилес килмен. Чун усрама кÿршĕри ялсенче—Ишмекейре, Кив Арланра, Энтепере ыйткаласа çÿренĕ вăл.

Аçтан ялан ыйткаласа çÿренипе тăранăн?

Абдул вунултă çула çитиччен Çĕн Арланкасси, Кив Арланкасси ялĕсенче кĕтÿ кĕтнĕ.

Октябрь революцийĕ Абдула та телей кÿрет. Вăл Ташкент хулине ĕçлеме каять. Кайран вара Донбасри шахтăсенче ĕçлет, 1924 çулта парти ретне кĕрет.

Абдул Гаязович Гаязов халĕ ĕнтĕ хăйне-хăй тинех çынсемпе тан шутлать. Ĕçлессе вăра вăр-вар, хăвăрт тухăçлă ĕçленĕ.

...Шахтă-шахтах. Çĕр вăл—çĕр. Вĕсем хушшинчи уйрăмлăх пысăк. Миçе пин тĕрлĕ çимĕç памасть вăл халăха. Анчах çĕре ăна пĕлсе ĕçлес пулать. Шахтăри ĕçе пĕтĕм чĕререн парăнса туна пулсан та çак шухăш канăç паман Гаязова.

...1930 çул. Гаязов ялта, юлташĕсемпе пĕрле, колхоз организацилет.

— Абдул, хăв пек чухăнсене телейлĕ те пуян пурнăç тума ертсе пыр пире,—тенĕ ăна ял халăхĕ, колхоз председательне суйласа.

Абдул Гаязович председатель пулса ĕçлеме тытăнать.

Ответлă та йывăр ĕç. Халĕ ĕнтĕ Абдул аллинче—ялти мĕнпур хресченсен малашнехи савăнăçлă пурнăçĕ. Тангăшĕсен тăйлăк-тайлăк килсурчĕсемпе ишĕлнĕ хуралтисем çумĕн иртнĕ-и вăл е хăйсен аслашшĕ лартса хăварнă пĕчĕк пÿртне пĕшкĕнсе кĕнĕ-и,—яланах: çак юхăнчăк пурнăçран çăланса тухма тинех вăхăт çитрĕ, тулăх та пуян, чăн-чăн пурнăçпа, çынсем пек пурăнма тытăнас пулать,—тесе шутланă.

Колхоз ÿссе, чăмăртанса пынă. Пĕрлешсе ĕçлени малтанхи çулсенчех колхозниксене хăйĕн пуян çимĕçĕсене панă. Аслă Пăла шывĕнчен нÿр илекен Сăрьел хирĕсенче колхозниксем çулсерен вăйлă та тухăçлă тырпул пăхса çитĕнтернĕ. Анса пулнă çулсенче кашни ĕçкунĕ пуçне çуршар пăт е 25-шер кĕрепенке тырă валеçĕннĕ. Савăнса та юрласа кăна пурăнма пуçланă колхозниксем, вĕсемпе пĕрлех Гаязов хăй те.

Колхозниксем кашни çул çĕнĕ çуртсем тăва-тăва лартнă. Çапла, 1939-мĕшпе 1940-мĕш çулсенче кăна ялти 40 колхозник хуçалăхĕ çĕнĕ çуртсем лартнă, колхозниксен килĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчесе кайнă. Абдул Гаязович хăй те, авалхи пĕчĕк кивĕ пÿртне пăсса, çĕнни—ултă кĕтеслĕ пысăк çурт лартнă, выльăх-чĕрлĕх усрама пуçланă. Унăн авалхи тертлĕ те хĕн-хурлă пурнăçĕ тинех манăça тăрса юлнă...

Колхоз вăл—тырпул фабрики. Тырă пулсан, пурте пулать. Колхозри пĕр ĕç тепĕр ĕçе пулăшса пырать. Çак шухăш Абдул Гаязовăн чĕрине çивĕччĕн кĕрсе вырнаçнă. Колхозра тырă нумай пулнă, анчах çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх пулман. Çавна пула государствăна аш-какай парас вырăнне тырпул нумай пĕтерме лекнĕ. Çавăнпа Абдул Гаязович фермăсем уçас пирки тимлĕн ĕçлеме тытăннă.

— Ака вăл пирĕн тăван çĕр,—тенĕ Абдул Гаязович,—тин çеç сухаласа кăпăшлатнă нÿрĕ тăпрана пĕр ывăç чăмăртаса илсе, — пирĕн çĕр! Мĕнле пуян вăл, иксĕлми пуян... Анчах, вăл пире çимĕç ытларах патăр тесен, ăна хăйне те вăхăтра апат парас пулать. Государство, ак, çĕре çемçетме минераллă удобренисем парать. Ăна пĕтĕмĕшлех хире кăларса тăкатпăр, унсăр пуçне тата килти кăшт-кашт тислĕке пухса хире кăларатпăр. Урăх мĕн? Нимех те параймастпăр вĕт çĕре?

— Выльăх-чĕрлĕх фермисем çукха пирĕн,—тенĕ ăна хирĕç пĕр ватă сухаçă.

— Çаплах çав, фермăсем çукки хуплать, фермăсем пулсан, пирĕн «Марс» колхоз районра çеç мар, республикăра та хăйĕн сăнсăпатне кăтартмалла,—тенĕ председатель.

Абдул Гаязович çине тăрса ĕçленипе, колхозра часах ĕнесем, сурăхсем, чăх-чĕпсем, хур-кăвакалсем, кроликсем ĕрчетме тытăннă. Паянхи кун тĕлне колхоз фермисенче 148 ĕне, 180 сурăх, 616 чăх, кроликсем нумай. 38 вĕлле хурт-хăмăр пур. Çакă вăл йăлтах—колхоз пуянлăхĕ, çакă вăл йăлтах—колхозниксен савăнăçĕ.

Абдул Гаязович, колхозниксемпе колхозницăсене темиçе çул хушши ертсе пырса, обществăллă хуçалăха тĕреклетессишĕн, тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăрасси́шĕн çине тăрса ĕçлеме вĕрентрĕ.

— Гитлерăн ĕмĕчĕсене лайăх пĕлетпĕр,—тенĕ митингра Абдул, тарăхнă сасăпа.—Вăл пирĕн ырă çимĕçсем паракан çĕре туртса илесшĕн, патша чухнехи пек хăйĕн чурисем туса хурасшăн, мана каллех ыйткалакан туса хурасшăн шăлне хăйрать, анчах çакă вăл ĕмĕрте те пулмĕ. Нимĕçĕн чугун çамкине хăвăртрах çапса шăтарас пулать,—тенĕ.

Тĕрлĕ асап, тĕрлĕ хĕн-хур курса, Абдул Гаязовичăн сывлăхĕ хавшанă. Çавăнпа та ытти çынсем пек аллине хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç фронтра çапăçма пултараймасть вăл. Çавăнпа фронта, мухтавлă Хĕрлĕ Çара хăйĕн хĕрÿллĕ ĕçĕпе, нумай çул хушши перекетлесе усранă укçитенкипе, тырпулĕпе пулăшса тăрать.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем пите́х те лайăх астăваççĕ-ха: иртнĕ çул Абдул Гаязович патне юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ хĕрÿллĕ салам янă. Абдул Гаязович танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 105 пин тенкĕ укçа, 36 пăт тырă пачĕ. Кăçал вăл оборонăн Государственнăй Заемне илме 15 пин тенкĕлĕх, лотерея билечĕсене илме 10 пин тенкĕлĕх çыранчĕ. Укçисене çийĕнчех тÿлесе татрĕ. Çак ырă чĕрелле, тÿрĕ кăмăллă колхозник-патриот çине пăхатăн та çапла шутлатăн: унăн хĕрÿ чĕри, пĕтĕм шăм-шакĕ нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатас шухăш-кăмăлпа çунса тăрать, тетĕн.

Гаязов юлташ ертсе пыракан колхоз членĕсем иртнĕ çул республикăра хăйсен хуçалăхĕнчи ытлашши тырра государствăна сутас ĕçе пуçарчĕç. Ку ĕçе республикăри темиçе çĕр колхозник хутшăнчĕ.

Сăрьел колхозникĕсем фронта пулăшас ĕçе вăйлатнăçемĕн вăйлатсах пычĕç. Колхоз председателĕ ватă коммунист Абдул Гаязов ертсе пынипе колхозниксем кăçал хирти тырпулĕсене вăхăтра, тирпейлĕн пухса кĕртрĕç. Государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен татрĕç. Колхоз 1944 çулшăн 300 центнер тырă, 44 центнер какай аванс шучĕпе парса хучĕ. Тагах кашни ĕçкунĕ пуçне 2-шер килограмм тырă валеçĕнет.

Кашни колхозник хуçалăхĕнче нумай çул хушши перекетленсе выртнă тырпул нумай. Гаязовăн хăйĕн те ытлашши тырă сахал мар. Çавăнпа вăл, Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен Мускаври тунă докладра итленĕ хыççăн, колхозниксене пухса калаçма шутларĕ.

— Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташăн докладне эпĕ радио тăрăх паннинех итлерĕм,—терĕ вăл.—Сталин юлташ пирĕн ĕçе, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне, фронтри боецсен ĕçĕпе танах шутласа, пире, колхоз хресченĕсене, пысăк хисеп турĕ. Сталин—тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар, тесе асăрхаттарчĕ. Тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас тетпĕр пулсан, пирĕн хамăрăн пĕтĕм вăя, фронта пулăшнă çĕре парас пулать. Эпĕ хам хуçалăхра перекетлесе усранă 50 пăт тырра государствăна сутатăп,—терĕ.

Председатель сăмахне Феттах Салахеев—унăн çамрăклăхри тусĕ—малалла тăсрĕ.

— Эпĕ пĕччен кăна ĕçлетĕп, манăн семьере 7 ача. Аслă ывăлăм Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Тăшмана хăвăртрах çĕнтерес тесе, эпĕ государствăна хамăн 35 пăт тыррăма сутатăп,—терĕ. Пуху хĕрсех пынă. Трибуна çине отечественнăй вăрçă инваличĕ медаленосец Шерхулла Бикмеев тухнă. Вăл 18 пăт сутма кăмăл тунă. Ун хыççăн отечественнăй вăрçă инваличĕ З. Сабирзянов 12 пăт, Алеев—15 пăт, Валышевпа Керме Самалетдинова 12-шер пăт сутнă. Çапла вара колхозниксем пĕр кăмăлпа государствăна 10.000 пăт тырă сутнă. Сутнă тырра пĕтĕмĕшлех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Нумаях та вăхăт иртмен хаçатсем тата радио республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнни çинчен пĕлтернĕ. Абдул Гаязович пĕр ирхине Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Краснов юлташ государствăна 100 пăт тырă сутни çинчен пĕлнĕ. Çавăнтах вăл семьере канашлу ирттерме шутланă. «Государствăна малтан сутнă 50 пăт тырă сахалтарах вĕт,—тенĕ вăл арăмне.—Мĕнехха вара, эпĕ колхоз председателĕ пулса пĕр вĕçĕмсĕр 13 çул хушши ĕçлетĕп. Мана ытти председательсенчен юлма намăс. Тырри пур, — сутас».

Абдул Гаязович çав кунах тепĕр хут колхозниксен пухăвне пухнă. Унта хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтернĕ.

— Малтан сутни сахалтарах пулчĕ,—тенĕ вăл,—эпĕ государствăна паян татах 55 пăт сутатăп. Çапла вара пурĕ 105 пăт пултăр,—тенĕ. Клубри халăх хăйĕн юратнă председателĕ çинчен, тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ çинчен куçĕсене илмесĕр пăхнă. Савăннă вĕсем ун çине пăхса. Чылайĕшĕсем çавăнтах малтан сутни çумне 5—10-шар пăт хушса сутнă...

Совет çĕрĕ çинче кĕçех тупă йĕтрисем çурăлма пăрахĕç, нимĕç захватчикĕсен йăхĕ-тĕпĕ те юлмĕ, Тăван çĕршыв вăрçă çуранĕсене тÿрлетĕ. Çамрăк ăру, виçĕ çул каярах пуян та тулăх пурнăçпа савăнса пурăннă пек, ырă курса пурăнма пуçлĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен шăмми-шаккисем çĕрсе пĕтĕç, пирĕн çĕршывра каллех телейлĕ те савăнăçлă пурнăç пуçланĕ. Совет халăхĕ вăрçăра чапа тухнă хăйĕн ывăлĕсене чысласа, хурçă палăксем лартĕ. Абдул Гаязович Гаязов патриотăн ĕçĕ ялан халăх куçĕ умĕнче пулĕ. Халăх çак çулăмлă патриотăн пархатарлă ĕçне ялан чĕре варринче усрĕ.

С. ШАДИН.
Елчĕк районĕ Сăрьелĕнчи «Марс» колхоз.

Çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ

КАНАШ. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Кунта акмалли вăрлăх фончĕ çителĕклĕ таран хывса, вăрлăхсене сортлама пуçланă. Çак ĕçе йĕркеллĕ туса пыма ятарласа бригада организациленĕ. Алексеева, Михайлова колхозницăсем кунне 15—16 центнер тырă сортлаççĕ. Кăçал колхоза 500 центнер акмалли вăрлăх кирлĕ, çак фондран 425 центнер тырра сортласа хунă. Çак кунсенчех пур вăрлăхсене те сортласа пĕтереççĕ. Паянхи куна колхозра ялхуçалăх машинисенчен 5 сеялкă, 10 плуг юсанă. Ку тĕлĕшпе колхоз тимĕрçи К. Александров юлташ тăрăшса ĕçлет

И. МАКСИМОВ.

Çамрăк выльăхсем валли пÿртсемпе апатсем

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). «Трактор» колхозăн выльăх-чĕрлĕх ферминче 60 пуç ĕне, сурăхсемпе качакасем 70 пуç, сысна тата хурсемпе чăх-чĕпсем пур. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне çулсеренех ирттерсе тултарса пырать. Выльăхсене вĕсем зоотехникăпа ветеринари кăтартăвĕсем тăрăх пăхса усраççĕ.

Ферма лайăх ĕçлени колхоза пысăк тупăш парать. Кăçал колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх çителĕклĕ таран çăм салатса панă. Фронтовик çемьисене 24 сысна çури сутнă. Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсене те сысна çурисемпе чăх-чĕпсем нумай парса пулăшнă. Кунпа пĕрлех тата фронтри боецсем валли 13 тир, 10 килограмм çăм панă. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма 6 сысна панă. Ферма государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмĕшпех парса татнă. Халĕ ферма çамрăк выльăхсене кĕтсе илме хатĕр. Кăçал вĕсем 30 путек валли тата 20 пăру хупмалăх ăшă пÿртсем хатĕрленĕ.

Ст. АСЛАН.

Вĕренекен комсомолецсен ĕçкунĕсем

Калининăри педагогика училищинчи комсомолецсем кăçал тырпула чи кĕске срокра пухса кĕртес ĕçре колхозсене сахал мар пулăшрĕç. Вĕсем уйхирте ĕçлесе 18.000 ĕçкунĕ турĕç. Уйрăм комсомолецсенчен Н. Тимофеев 230 ĕçкунĕ, В. Ландышевпа М. Терентьев 300-шер ĕçкунĕ ытла турĕç.

Çавăн пекех тата, чкаловецсен примерĕпе, училище садĕнче вĕсем çĕнĕрен 75 тĕп улмуççи, 200 тĕп хăмла-çырли, 20 тĕп чие йывăççи лартрĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Италири вăйлă хумханусем

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). „Нюа даглигт аллеханда" ятлă хаçат çапла пĕлтерет: Берн хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Çурçĕр Италире вăйлă хумханусем пуçланса кайнă. Çурçĕр Италири пур районсенче те тенĕ пекех çапăçусем пыраççĕ. Нимĕççене тĕллĕн-тĕллĕн хăйсен позицийĕсенчен каялла чакарнă. Восстани пуçласа янă итальянецсем Сан-Мартинора çирĕпленсе тăраççĕ, кунта кунĕн-çĕрĕн çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем кунти çапăçăва хăйсен самолечĕсемпе танкĕсене янă. Икĕ енĕ те питĕ пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Милан хулинче восстани пуçланса кайнă.

Турин хулинче пĕтĕмĕшле забастовка пуçланса кайнă. Вырăнти влаçсем кунти рабочисене ĕçе тăма чĕннĕ, ĕçе тухмасан пысăк наказани парассипе хăратнă. Анчах та влаçсен распоряженине пĕр рабочи те пăхăнман.

ИТАЛИРИ ВАРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи эсминецĕсем Англин 5-мĕш армине пулăшас шутпа тăшманăн Минтурно районĕнчи позицийĕсене персе тăнă. Вĕсем çине çыранран хирĕç пенĕ. Союзниксен вăйĕсене çухату ята, сиен те тăвайман.

Англин 8-мĕш армийĕпе Америкăн 5-мĕш армийĕ, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сире-сире ярса, малалла куçса пыраççĕ. Тăшманăн нумай çынни вилнĕ, аманнă е тыткăна лекнĕ. 8-мĕш арми çыран хĕрринчи пур вырăнсем тăрăх та малалла куçса пырать. Сан-Вито-Кьетинона тытса илнĕ, союзниксен çарĕсем халь Моро шывĕ патнелле куçса пыраççĕ. Тăшман Орсонья районĕнче вăйлăн хирĕç тăрать.

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: тăшман вăйлăн хирĕç тăрать пулин те, союзниксен çарĕсем икĕ флангра та малалла куçса пыраççĕ. Тăшманăн питĕ нумай çын вилнĕ, аманнă тата тыткăна лекнĕ.

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче (унта тăшман çĕнĕ вăйсем илнĕ). хаяр çапăçусем пынă. Англи чаçĕсем çыран хĕррипе малалла куçнă. Халĕ вĕсем Моро шывĕ патĕнче тăраççĕ.

Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче çĕнĕрен çÿллĕ вырăнсем йышăнса илнĕ. Тăшманăн контратакисене сирсе янă, тăшмана пысăк тухатусем тÿстернĕ.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене тапăннă.

Боливия тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçлать

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Боливия тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернĕ. Çак решение пĕрлешÿллĕ нацисен Вашингтонра йышăннă декларацине Боливи президенчĕ Пеньяранда алă пуснине Боливин наци конгресĕ ырланă хыççăн йышăннă.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Чăваш АССР прокуратури государствăна тырă сутас ĕçе чăрмантарнăшăн Октябрьски районри «Коммунизм» колхозăн председательне Н. Владимирова, ревизи комиссин председательне С. Игнатьева, колхоз счетоводне М. Николаевăна, çавăн пекех тата «Крестьянин» колхозăн председательне В. Скворцова, счотоводне Павлова суда панăччĕ.

Çар трибуналĕ, çав ĕçе пăхса тухса, Н. Владимирова—10 çуллăха, С. Игнатьева—8 çуллăха, М. Николаевăна—5 çуллăха, В. Скворцова—5 çуллăха, Павлова—5 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкари уйрăм çынсене тумтир çĕлесе паракан мастерской тумтир çĕленĕшĕн малтан аванс парса хурса квитанци илнĕ çынсене çав квитанцисене декабрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20 мĕшне çитиччен мастерскоя пырса çыртарма ыйтать. Квитанцие пырса çыртармасан, аванс тÿлеме шутлакать.

Чебторга СТОЛЯРСЕМ тата столяр ĕçне вĕренес текен учениксем кирлĕ. Ĕç укçи калаççа татăлнă тăрăх.

Çак адреса ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1891 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л Тираж 14.400 экз,